www.tavanen.ru
# Тăван Ен
плюс Причебоксарье


Гиппократ тупипе

Пĕр чарăнмасăр – 1323 хут! СЫВĂ ПУРНĂÇ → 3
«Ăслă» технологисен ĕмĕрĕ РЕСПУБЛИКĂРА → 5
Пултарулăхĕпе Мускава парăнтарнă ĔÇ ÇЫННИ → 7

№18 • (106255-106256) • МАЙĂН 11-МĔШĔ • 2018 • КĔÇНЕРНИКУНСЕРЕН ТУХАТЬ
Хакĕ ирĕклĕ
Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать

● КАЛЕНДАРЬТИ КУН



# Çĕнтерӳçĕсене чыс та мухтав!

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вĕçленнĕренпе кăçал 73 çул çитрĕ. Мĕн чухлĕ йывăрлăх тӳсме тивнĕ пирĕн асаттеасаннесен! Çапах та вĕсем хĕн-хура чăтса ирттернĕ, парăнман, çĕнтернĕ. Çак кун эпир, паттăрсен несĕлĕсем, тав сăмахĕсене паллах, вăрçă ветеранĕсене калатпăр. Эпир пурне те ас тăватпăр, сирĕн хăюлăхăрпа мăнаçланатпăр!**

Кӳкеçри Паллă мар салтак палăкĕ умĕнче иртнĕ савăнăçлă митинг, парад майăн 9-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи çулталăкри чи пĕлтерĕшлĕ уяв пулчĕ. Çак кун çанталăк та савăнчĕ тейĕн. Мирлĕ, янкăр таса кăвак тӳперен ăшшăн пăхакан хĕвел пекех çынсен сăн-пичĕ те кулăпа, хаваслă кăмăл-туйăмпа çуталчĕ. Савăнăç куççулĕпе те. Ветерансене хисепленине палăртма палăк умне çĕр-çĕр çын çемйисемпе тухрĕ. Георги хăйăвĕсем, штандартсем çинчи вăрçă участникĕсен сăн ӳкерчĕкĕсем, тĕрлĕ тĕслĕ шарсем, ялавсем, капăр тумлă тата телейлĕ ачасем, аслисен çĕкленӳллĕ сăн-пичĕ – çакă пĕтĕмпех мăнаçлăх туйăмĕпе халăх пĕрлĕхĕн сĕмне кӳчĕç, общество Аслă Çĕнтерӳ кунне сума сăвакан ăрăва çитĕнтернине пĕлтерчĕ.

Шел, çĕнтерĕве çывхартнă вăрçă ветеранĕсем, тыл ĕçченĕсем çулран çул сахалрах та сахалрах. Кăçал Çĕнтерӳ кунне районта 26 вăрçă ветеранĕ кĕтсе илчĕ. Вĕсенчен кашни çĕр çула çывхарса пырать. Вăрçă ветеранĕсене, вăрçă участникĕсен тăлăх арăмĕсене тата тыл ĕçченĕсене ЧР Патшалăх Канашĕн вице-спикерĕ Альбина Егорова, ЧР Патшалăх Канашĕн наци политикипе тата социаллă ыйтусемпе ĕçлекен Комитет председателĕ Вячеслав Рафинов, Шупашкар район пуçлăхĕ Николай Хорасев, райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриев, ЧР çар комиссариачĕн Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи уйрăмĕн пуçлăхĕ Александр Кочуров, Кӳкеç поселокĕн пуçлăхĕ Владимир Вершинин тав сăмахĕсем каларĕç.


Палăк умне чĕрĕ чечексем хучĕç

«Паян çĕршывăн паттăрĕсем умĕнче эпир пуçа таятпăр. Вĕсем тĕнчене фашизмран тасатса мирлĕ пурнăç парнеленĕ. Ветерансене, тылра ырми-канми вăй хунисене уйрăмах тав тăватпăр. Паян эпир пурăнма, юратма, ĕçлеме, юратнă çĕршыва аталантарма пултаратпăр. Çĕнтерӳ кунĕ – паттăрлăх, хăйне шеллемесĕр ыттисене ырă тăвассишĕн кĕрешнин символĕ, çакă пирĕн халăх чапне хастаррăн хӳтĕлеме тата ӳстерме чĕнсе калани те, çĕршыв мăнаçлăхне аталантарни те. Çакă тĕнчере мирлĕ пурнăçа сыхласа хăварма чĕнсе калани те», – терĕ Альбина Егорова. «Кашни кун савăнăçпа тултăр. Вăрçă ахрăмĕсем кĕнекесенче тата фильмсенче кăна юлччăр.

→ 9

● РЕСПУБЛИКĂРА

**МАЙĂН 10-МĔШĔНЧЕ ЧĂВАШ ЕН ПУÇЛĂХĔ МИХАИЛ ИГНАТЬЕВ ЕРТСЕ ПЫНИПЕ** Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн черетлĕ ларăвĕ иртнĕ. Канашлăва пухăннисем республикăн 2018 çулхи I-мĕш кварталĕн бюджетне сӳтсе явнă. 2018 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне республика хыснин тупăш пайĕ 10566 млн тенке çитнĕ, вăл шутран регионăн харпăр хăй тупăшĕ 6217,1 млн тенкĕпе танлашнă. 2017 çултипе танлаштарсан 3,1% пысăкрах – пĕлтернĕ Чăваш Республикин финанс министрĕ Светлана Енилина. Бюджета налуксенчен 5973,6 млн тенкĕ кĕнĕ. Каялла тавăрса памалли мар укçа федераци центрĕнчен 4348,9 млн тенкĕ куçнă. Чăваш Республикин патшалăх умĕнчи парăм пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан чылай чакнă, кăтарту 6225 млн тенке çитнĕ. ■

**ЧĂВАШ ЕН ПУÇЛĂХĔ МИХАИЛ ИГНАТЬЕВ МУНИЦИПАЛИТЕТ ЕРТӲÇИСЕМПЕ ИРТТЕРНĔ ВИДЕОКОНФЕРЕНЦИРЕ** Аслă Çĕнтерĕве халалланă уяв мероприятийĕсене пĕтĕмлетнĕ. Майăн 9-мĕшĕнче пурĕ 200 ытла массăллă мероприяти иртнĕ. Апрель вĕçĕнчен тытăнса майăн 9-мĕшĕччен иртнĕ уяв мероприятийĕсене 245 пине яхăн çын хутшăннă. Пĕтĕм Раççейри «Вилĕмсĕр полк» акци Чăваш Республикинче 94 пин ытла çынна пĕрлештернĕ. Михаил Игнатьев çӳреве хутшăннă пур çынна та тав тунă. Чăваш Ен Правительство членĕсем, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, Çĕнтерӳ кунне тивĕçлĕ шайра ирттерес ĕçре пуçару кăтартнă тата хăйсен тӳпине хывнă хастарсем ыра сăмаха тивĕçнĕ. ■



Паян Кӳкеçри «Улăп» стадионра «Тăван Ен» ХАÇАТ ПАРНИСЕМШĔН 52-МĔШ ХУТ ЭСТАФЕТА ИРТЕТ.




ПУРНЕ ТЕ 15 СЕХЕТЕ ĂМĂРТĂВА ЙЫХРАВЛАТПĂР!

Сырăнтару индексĕ П6022



Александр МОЖАРОВ, Шупашкар



АКЦИ!

Май уйăхĕн 10-20 мĕшĕсенче Раççей Почти çăмăллăхлă çырăнтару декадине йĕркелет. Çак тапхăрта «Тăван Ен» хаçатăн çырăнтару хакне пур почта уйрăмĕнче те 385 тенкĕ те 50 пусран 336 тенкĕ те 96 пус таран чакараççĕ. Юратнă хаçата йӳнĕрех хакпа çырăн та – лотерейăна хутшăнса парнеллĕ пул!

# Кун йĕркинче



**Михаил ИГНАТЬЕВ,** Чăваш Ен Пуçлăхĕ:

– Аслă Çĕнтерĕве мĕнле хакпа çĕнсе илнине эпир питĕ лайăх пĕлетпĕр, çавăнпа та Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пынă паттăрла кĕрешӳре тăшмана парăнтарнă харсăр чунлă çынсен çапăçури тата ĕçри хастарлăхне чыслăн сума сăватпăр. Пирĕн паянхи тивĕç – вĕсен ятне, паттăрлăхĕпе хастарлăхне ĕмĕр-ĕмĕр асра тытасси тата упрасси. Эпир истори страницисене улăштарса çырма никама та ирĕк памастпăр!

**ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН АСЛĂ ВĂРÇИНЧЕ ÇĔНТЕРНĔРЕНПЕ 73 ÇУЛ ÇИТНИНЕ ХАЛАЛЛАСА ШУПАШКАРТА** иртнĕ митинга 9 пин ытла çын хутшăннă. Вăрçă ветеранĕсене, тыл ĕçченĕсене, парада хутшăнакансене, хăнасене республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хĕрӳллĕн саламланă.

Чăваш Республикинчен вăрçă хирне 208 пин ытла çын тухса кайнине, вĕсенчен çурри ытла каялла таврăнайманнине пăшăрханса пĕлтернĕ вăл. Тыл ĕçченĕсем те Çĕнтерĕве çывхартассишĕн пĕтĕм чунтан тăрăшнă. Вăрçăн тумхахлă çулĕсем хыççăн та хуласемпе ялсене, заводсемпе предприятисене ура çине тăратассишĕн ырми-канми вăй хунă – палăртнă регион Ертӳçи. Хальхи вăхăтра регионта пурĕ 816 сусăр пурăнать, вĕсен хушшинче вăрçă ветеранĕсем те чылай. Тыл ĕçченĕсем 13 400-ĕн тăрса юлнă. «Вĕсемпе тĕл пулса калаçнăшăн эпир çав тери хĕпĕртетпĕр. Вĕсен хĕрӳллĕ аллисене тытса мăнаçланма пултаратпăр. Тавах пире мирлĕ пурнăç парнеленĕшĕн», – пĕлтернĕ хăйĕн шухăшне Михаил Игнатьев.

Çынсем палăксем умне чĕрĕ чечек çыххисем хунă, паттăр салтаксене асăнса пĕр минут шăп тăнă. Кăçал парада пин ытла çынна явăçтарнă, çар техникисем 55 ытла пулнă. Уяв «Вилĕмсĕр полк» акципе вĕçленнĕ. Кăçал вăл Раççейре улттăмĕш хут иртнĕ. Пирĕн регионти тĕп хуламăрта 30 пин ытла çын паттăрсен портречĕсемпе утнă. ■

## ● РАЙОНТА

**КĂÇАЛХИ ÇĔНТЕРӲ КУНĔ МОШКАССИСЕМШĔН НУМАЙЛĂХА АСРА ЮЛĔ** – кунта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса палăк уçăлнă. Митинга ветерансем, ял çыннисем, шкул ачисемпе вĕрентекенсем хутшăннă. Сумлă хăнасен йышĕнче райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриев пулнă. Вăл пухăннисене Çĕнтерӳ кунĕпе саламласа çирĕп сывлăх, мирлĕ тӳпе суннă. Ветерансене ырă сăмахсемпе ял тăрăх пуçлăхĕ Андрей Михайлов, вырăнти депутатсем, ял хастарĕсем хавхалантарнă. Палăка ял çыннисен пуçарăвĕ çинче никĕсленнĕ инициативлă бюджет программипеçĕкленĕ.

«Вилĕмсĕр полка» хăйсен аслашшĕ-ашшĕсен сăн ӳкерчĕкĕсемпе хутшăннă ачасем, аслисем çывăх çыннисен паттăрлăхне яланах асра тытнине тепĕр хут ĕнентернĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх, пухăннисем палăк умне чечексем хунă. ■



**ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН АСЛĂ ВĂРÇИНЧЕН ТАВРĂНАЙМАННИСЕНЕ АСĂНСА ЛАРТНĂ** Вăрманкас Тăрăнти палăк умне майăн 8-мĕшĕнче каçхи 8 сехетре ялти хастарсем, шкул ачисем пуçтарăнчĕç, асăну çуртисене çутрĕç. Вăрçă çулĕсенчи йывăр вăхăтсем, ентешсен паттăрлăхĕ çинчен Чăрăшкасси ял тăрăх пуçлăхĕ В.Я. Павлов тата клуб заведующийĕ В.М. Спиридонова каласа хăварчĕç.

Уяв тепĕр кунне малалла тăсăлчĕ. Чи малтанах палăк умне ветерансен канашĕн ертӳçи М.П. Павлова, ĕç ветеранĕсем Г.Е. Ефимов, В.Л. Леонидов паттăр ентешсене тав туса чечек кăшăлĕ хучĕç. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен таврăнманнисене асăнса пĕр самант пурте шăп тăчĕç. Салам сăмахĕсемпе ял тăрăх пуçлăхĕ В.Я. Павлов, Тăрăн шкул директорĕ В.П. Васильев, район представителĕ Е.А. Коновалова тухса калаçрĕç. Вĕсем пухăннă ватăсене мирлĕ тӳпешĕн, хăрушă вăрçа чăтса ирттернĕшĕн, çĕршыва çĕкленĕшĕн тав турĕç, кулленхи пурнăçра çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, тăнăç пурнăç сунчĕç. Шкул ачисем сăвăсем вуларĕç, юрăсем шăрантарчĕç, ташăсем ташларĕç, палăк умĕнче хисеплĕ караулта тăчĕç. Ветерансем вĕри чейпе сăйланчĕç, «Тăрăн ен» ушкăн пултарулăхне курса савăнчĕç. ■

**ÇĔНЬЯЛ ШКУЛĔН ВОЛОНТЕРСЕН КОМАНДИ РАЙОНТИ «СЫВЛĂХ ВОЛОНТЕРĔСЕН ЧИ ЛАЙĂХ КОМАНДИ» КОНКУРСА ХУТШĂННĂ.** Районти шкулсен хушшинче чи маттуррисене палăртнă конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе. Çĕньялсем «Пурнăç чечекĕ» инсценировка кăтартнă, юрăсем шăрантарнă. Вĕсенче сывă пурнăç йĕркине пăхăнмаллине, ырă мар йăласем этемĕн пурнăçне пысăк витĕм кӳнине каласа панă ачасем. Асăннă мероприятие 5-мĕш тата 9-мĕш класссенче вĕренекенсем хутшăннă. Конкурс пĕтĕмлетĕвĕсемпе Çĕньял шкулĕн сывлăх волонтерĕсен команди 3-мĕш вырăна тивĕçнĕ. ■

## ● ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ

# Çур аки вăй илсе пырать



«Атлашевский СХК» ОАО техники хăватлă

В. Шумилова сăн ӳкерчĕкĕ

**Çĕр лаптăкĕсем типсе çитессе чăтăмсăррăн кĕтеççĕ уй-хир ĕçченĕсем. Агрономсем уй-хирсене çине-çинех çаврăнаççĕ. Пĕлтĕр «Атлашевский СХК» ОАО пуринчен малтан апрелĕн 27-мĕшĕнче акана пуçăннă пулсан, кăçал çанталăка пула уй-хире каярах тухма лекрĕ.**

Çур акие ирттересси – Правительство çуртĕнче тунтикунсерен иртекен планеркăн чи çивĕч ыйтăвĕсенчен пĕри пулса тăнă. Уй-хирти лару-тăрупа ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов паллаштарнă. Майăн 7-мĕшĕ тĕлне 18 муниципалитетра 14,5 пин га çинче тыр-пул акса хăварнă. Сергей Геннадьевич хуçалăхсем талăкра 10-12 пин га тыр-пул акнине шута илсе çур аки ĕçĕсене пĕтĕмĕшле 15-17 кунра вĕçлеме палăртнине асăнчĕ. Республикăри хуçалăхсем вăрлăх пахалăхне тимлĕх уйăрни те пĕлтерĕшлĕ: 52,1 пин т вăрлăх (кирлинчен 106%) хатĕрленĕ, тĕрĕслев витĕр тухнинчен 96% – кондициллĕ.

Районти хуçалăхсемшĕн те хĕрӳ тапхăр пуçланчĕ. Тĕрлĕ ĕç пурнăçланать уй-хирте: çĕр ĕçченĕсем кĕрхисемпе нумай çул ӳсекен курăксене апатлантараççĕ, сӳрелеççĕ, вăрлăха имçамлаççĕ, çĕр улмие яровизацилеççĕ, акаççĕ. Ĕнерхи кăтартусем çакăн пек: çак кунсенче «Ольдеевская» агрофирма» ЗАО 50 га урпа, 54 га сĕлĕ, «Прогресс» ЗАО 100 га урпа, «Чурачикское» ОАО 150 га урпа, «Атлашевский СХК» ОАО 105 га çурхи тулă, 143 га урпа, 60 га сĕлĕ, 43 га пĕр çул ӳсекен курăк, Куйбышев ячĕллĕ СХПК-колхоз 50 га урпа акса хăварнă. Пĕтĕмĕшле ял хуçалăх предприятийĕсем 742 га çурхи культурăсене акнă, 1180 т тыр-пула имçамланă, 2728 га кĕрхисене, 1954 га нумай çул ӳсекен курăка апатлантарнă, 2676 га кĕрхисене тата 2661 га нумай çул ӳсекен курăка сӳреленĕ.

Çурхи ĕçсемпе райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриев та, унăн çумĕ – ял хуçалăх тата экологи пайĕн пуçлăхĕ Сергей Ванюшкин та паллашсах тăраççĕ. Ытларикун вĕсем «Атлашевский СХК» ООО тата «Ольдеевская» агрофирма» ОАО уй-хирĕсене çитсе килчĕç. «3 лаптăк çинче ака ĕçĕсем пыраççĕ, 6 тата 5,4 метр сарлакăш сеялкăсемпе акатпăр», – ĕçсемпе паллаштарчĕ маларах асăннă хуçалăх агрономĕ Борис Николаев. Кăçал хуçалăх темиçе трактор, сеялка, культиватор туянма вăй-хал çитернĕ, кадрсем те çителĕклипех. «Резервра 3-4 тракторист», – калаçăва хутшăнчĕ хуçалăх управляющийĕ Сергей Михайлов. «Ольдеевская» агрофирма» ОАО ытларикун уя пĕрремĕш кун акма тухнăччĕ.

«Çурхи кун çулталăк тăрантарать», – ахальтен çапла каламаççĕ ваттисем. Çур аки ĕçĕсене ăнăçлă ирттерес тесен техника йĕркеллĕ пулни те, вăрлăх, сунтармалли-сĕрмелли хатĕрсем çителĕкли те пĕлтерĕшлĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсенчен хăшĕпĕринче трактористсем çителĕксĕр – ку та хĕрӳ ĕçси вăхăтĕнче ура хума пултарать. Çапах та район уй-хирĕсенче çур аки ĕçĕсем кунран-кун вăй илсе пыраççĕ.

■ ДЕОМИД ВАСИЛЬЕВ

# Кăмăл пулсан ĕç тупăнатех

## ● ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШĂВĔ



В. Шумилова сăн ӳкерчĕкĕ

**Республикăн Ĕç тата социаллă хӳтлĕх министерствин Шупашкар районĕнчи Ĕçпе тивĕçтерекен центрĕн тĕллевĕсенчен пĕри – ĕçлеме пултаракан инвалидсене хăйĕн вырăнне тупма пулăшасси. Кăçалхи май уйăхĕ тĕлне инвалидсен 27% – пурĕ 347 çын – тĕрлĕ предприяти-организацире вăй хуни паллă.**

Кӳкеçре пурăнакан 3-мĕш ушкăн инваличĕ Михаил Захаров та Ĕçпе тивĕçтерекен центр пулăшăвĕпе нумаях пулмасть хăйĕншĕн шăл çемми ĕç тупнă. Иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕнче кăна центра учета тăнăскер паян ытти çын пекех ĕçеваскать. Хваттертен Кӳкеçри 1-мĕш шкула çитме вăхăт нумай та кирлĕ мар, уçăлса çӳреме вара ăна тухтăрсем хăйсем хушнă.

Ача чухнех сывлăх енчен хавшакрах пулнă вăл, анчах физкультурăпа туслă пулнипех хăйне ыттисенчен кая туйман. Пушшех те, сывлăха çирĕплетес тĕллевпе хăй тĕллĕн зарядка тунă, хăйĕн тăрăх сивĕ шыв ярса çан-çурăма çирĕплетнĕ. Янашкасси, кайран Шăмăш шкулĕнчен вĕренсе тухсан Шупашкарти пĕр техникумра ăс пухнă, электрик профессине алла илнĕ. Тĕрлĕ предприятире вăй хунă вăл, хăйне шеллемен – нумай çул пĕр харăс икĕ вырăнта ĕçлесе пурăннă. Сиенлĕ производствăра вăй хуни те витĕм кӳнĕ – Михаил Захаров час-часах пуç ыратнипе аптăрама тытăннă. 12 çул пĕр вырăнта ĕçленĕ хыççăн вăл ĕçрен тухма заявлени çырать. Вăхăт иртнĕçемĕн сывлăхĕ самаях хавшать Михаил Ивановичăн – темиçе çул каялла ăна 3-мĕш ушкăн инвалидноçне параççĕ.

Иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕнче районти Ĕçпе тивĕçтерекен центра учета тăрать вăл, нумай та вăхăт иртмест – ĕç сĕнеççĕ. Турткаланса тăмасть Михаил Захаров, паян вăл – Кӳкеçри 1-мĕш шкулта здание тата сооруженисене пăхса тăракан рабочи. «Ĕçĕ йывăр мар, мĕн хушнă – çавна тăватпăр. Кантăк ванать-и, лампа улăштармалла-и, туалетра шыв юхать-и – çавсене тӳрлететпĕр», – каласа парать вăл хăйĕн тивĕçĕсем çинчен. Çакна унăн пуçлăхĕ – Кӳкеçри 1-мĕш шкулăн завхозĕ Андрей Кузьмин та çирĕплетет. «Мĕн каланине пĕтĕмпех пурнăçлать», – тет вăл çĕнĕ çыннăн ĕçне хакласа.

Районта ĕçлеме пултаракан 1307 сусăра шута илнĕ. Вĕсенчен 182 çын 1-мĕш, 398 çын – 2-мĕш, 697 çын тата 14-18 çулсенчи 30 ача – 3-мĕш ушкăн инваличĕсем. 373 сусăр ĕçлес кăмăллă пулнине пĕлтернĕ. Çулталăк пуçланнăранпа ĕç тупас тĕллевпе Ĕçпе тивĕçтерекен центра сывлăхран хавшак 16 çын пынă. Центр специалисчĕсем сусăрсене тивĕçлĕ ĕç тупса парас тĕллевпе профориентаци ĕçĕсем ирттереççĕ. Енчен те инвалид хăй алла илнĕ профессипе вăй хураймасть е пачах та профессисĕр пулсан сусăра вĕренме кайма е хушма професси илме сĕнеççĕ. Çулталăк пуçланнăранпа 3 сусăр ĕç рынокĕ ыйтакан профессие алла илнĕ. Ĕçлеме пултаракан инвалидсене предпринимательствăна явăçтарасси те пĕлтерĕшлĕ. Ун пеккисене патшалăх пулăшу кӳрет.

Ĕçпе тивĕçтерекен центртан пĕлтернĕ тăрăх, кăçал ĕç шырас ĕçре йывăрлăхсем туякан ĕççĕр çынсене вăхăтлăх ĕçе вырнаçтарас килĕшӳпе 6 çынна, çав шутра нумай ачаллă 2 амăшне, пенси çулĕчченхи 3 çынна тата 1 сусăра килĕшӳллĕ ваканси тупса панă. План тăрăх, 2018 çулта çавăн пек 18 çынна ĕçпе тивĕçтермелле.

■ АННА ФИЛИППОВА

## ● РАЙОНТА

**КӲКЕÇРИ ЛИЦЕЙ ÇУРЧĔН ТĂРРИНЕ** улăштаракан подрядчик майăн 14-мĕшĕ хыççăн паллă пулĕ. Патшалăх сутуилĕвĕсен порталĕнче заявкăсене шăпах çак вăхăтчен йышăнассине пĕлтереççĕ. Контрактăн пуçламăш хакĕ 7970910 тенкĕпе танлашать. Поселокри вĕрентӳ учрежденийĕнче 1132 ача ăс пухать. ■

**КӲКЕÇРИ «БИЧУРИН ТАТА ХАЛЬХИ САМАНА» МУЗЕЙ КĂÇАЛХИ МАЙĂН 15-МĔШĔНЧЕ** иртекен XV Апаш вулавĕсене хутшăнма заявкăсене малалла йышăнать. Кăçал калаçу Шупашкар районĕнчи Сарапакасси ял тăрăхĕн археологи палăкĕсем, Чăваш патшалăх академи драма театрĕн Шупашкар районĕнче çуралнă артисчĕсем тавра пырĕ. Юлашки секцие театрăн 100 çулхи юбилейне халалланă. Вулавсем Çатра-Хочахмат шкулĕнче 11 сехетре пуçланаççĕ. Вĕсен программине Сарапакасси ял тăрăхĕнчи археологи палăкĕсемпе паллашассине те кĕртнĕ. ■

**«ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ПУРĂНАКАН НУМАЙ АЧАЛЛĂ ÇЕМЬЕСЕНЕ** çĕр лаптăкĕсемпе тивĕçтересси» закона пурнăçласа Шупашкар районĕнче патшалăхăн çакăн пек пулăшăвне кӳме иртнĕ уйăх вĕçленнĕ тĕле йышлă 895 çемьене шута илнĕ. 662 çемьене пурĕ 73,46 га чухлĕ лаптăк уйăрса панă та ĕнтĕ. 623 çĕр лаптăкне харпăрлăха регистрациленĕ. Кăçал 210 çемьене çĕр лаптăкĕпе тивĕçтерме палăртса хунă. Çак тĕллевпе Ишлей ял тăрăхĕнчи Етĕрнекасси, Çĕньял ял тăрăхĕнчи Шăмăш, Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕнчи Атăлъял, Кăшавăш ял тăрăхĕнчи Кăшавăш, Тутаркасси ял тăрăхĕнчи Толик Хураски ялĕсен чиккисене улшăнусем кĕртеççĕ. Çакă черет кĕтекен нумай ачаллă çемьесем валли 155 лаптăк хатĕрлеме май парĕ. ■

## ● ЫЙТУ-ХУРАВ

## Çăва патне мĕнле çитмелле?

**? Нумай пулмасть виле пытарма тӳр килчĕ. Ишлей çăви çине кайма тухнăскерсем çав тери хытă нушалантăмăр. 3 çăмăл машина, «Газель» – пурте лакса лартăмăр. Арçынсем машинăсене тĕксе те, троспа туртса та пăхрĕç, вараланса пĕтрĕç. Çумăрлă çанталăкра çăва çине пырса кĕресси пирки шухăшлама та кирлĕ мар. Нивушлĕ çăва патне пыракан çула йĕркене кĕртме çук?**

■ *Алина САМСОНОВА, Ишлей*



**Евгений СУББОТИН,**
Ишлей ял тăрăх пуçлăхĕ:

– Асăннă çăвана 2015 çулта уçнă, ун патне çитес тесен газ компрессорĕн станцийĕнчен 800 метр тăршшĕ уйпа пымалла. «ИЗВА» ООО территорийĕнчи котельнăйĕн кивĕ зданине сутма палăртнă. Ăна хак панă. Унран юлнă кирпĕч ванчăкĕсене çăва çине илсе çитерекен çула юсама усă курăпăр. Çак ĕçсене кăçал çулла пурнăçлама палăртнă. ■

## Кире пуканне 26645 хут çĕклерĕç

**Вăрçă вĕçленнĕренпе шăп та лăп çакăн чухлĕ кун çитрĕ.**

Майăн 9-мĕшĕнчи уяв мероприятийĕсем «Улăп» ФОК умĕнчи лапамра «Пурăн!» литературăпа вокал композицийĕпе тăсăлчĕç. Çак вăхăтрах Çĕнтерӳ кунне халалланă спорт ăмăртăвĕсем иртрĕç. Сывă пурнăç йĕркине кăмăллакансем, спортсменсем мас-рестлингра, армрестлингра, шашка-шахмат вăййинче, дартсра вăй виçрĕç. Кире пуканĕ йăтассипе «Шупашкар районĕнче – 2018 çулхи Çĕнтерӳ рекорчĕ» спортпа патриот акцийĕ иртрĕ. Каччăсемпе хĕрсем, ятлă спортсменсем кашни хăйĕн тӳпине хывса кире пуканне пурĕ пĕрле 26645 хут çĕклерĕç. Кӳкеçри 27-мĕш училищĕре вĕренекен, федерацин Атăлçи округĕн ирĕклĕ кĕрешӳпе спорт мастерĕн Петр Семеновăн мăнукĕ Денис Гурьев çак кун шашкăлла та вылярĕ, помост çине те тăчĕ. Йывăр атлетика спортсменĕ Иван Бурдаков кире пуканне 123 хут çĕклерĕ. Пуринчен ытла Александр Павлов палăрчĕ. Темиçе каслă Раççей спорт мастерĕ 16 кг таякан снаряда пĕр сехет хушши çĕклерĕ. Пурĕ 1323 хут! ■



А. Павлов

## 10750 çын

Шупашкар районĕнче Аслă Çĕнтерӳ кунĕн уявне хутшăннă.

# Шурă халата юратнипе

### Пурнăçа медицинăпа çыхăнтарнă

**Майăн 12-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери медицина сестрисен професси уявне паллă тăваççĕ. Чаканарта 20 çул фельдшерта тимлекен Калерия Иванова та ĕç стажне медицина сестринчен пуянлатма тытăннă. 65 çула çывхарсан та унăн хавхаланса ĕçлеме сăлтав пур – кăçал кивĕ фельдшер пункчĕ вырăнне çĕнни, хăтли хута каймалла. Çакна вăл чăтăмсăррăн кĕтет. Çĕнĕ ФАП валли пĕлтĕрех вырăн хатĕрленĕ, ăна йывăç-тĕмрен, вĕсен тымарĕсенчен тасатнă.**



В. Шумилова сăн ӳкерчĕкĕ

К. Иванова яланах итлеме хатĕр

### Ĕмĕтсем пурнăçланаççĕ

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче хăпартнă çурт тул енчен пăхсанах йĕри-таврари çуртсенчен имшертерех курăнать, çапах та шалта ăшă, çутă, тирпейлĕ. Хăй вăхăтĕнче унта Калерия Петровна тăрăшнипех газ, шыв кĕртнĕ, канализаци кăларнă. «ФАПа газ кĕртес тесе Горький хулине икĕ хут та çитсе килтĕм вĕт», – аса илет темиçе çул каяллахи йывăрлăхсене фельдшер. Вăл Ырашпулăх тата Чаканар ялĕсенчи 400 яхăн çынна пăхса, сиплесе тăрать. Вĕсен йышĕнче çулталăк тултарман 4 ача, çул çитменнисем 33-ĕн, 1 вăрçă ветеранĕ.

«Пӳртем вĕçĕ ансах пырать, çĕннине тăвиччен ларать пуль-ха», – кăтартрĕ вăл ФАПа кĕме йыхравланă май çитменлĕхсене. Шалта – чирлисене йышăнмалли, капельницăсем лартмалли, эмелсене упрамалли кĕтессем. Çынсем ыйтакан чи кирлĕ эмелсем – чĕре, пуç, сыпăсем ыратнинчен, юн пусăмĕ хăпарнинчен – пурте пур. Çӳлĕксем çинче – комплектланă фельдшер сумки. Чирлĕ çын патне каймалла пулсан унта пурте пур – вăхăт перекетленет. Акă ирхине те фельдшер чирлĕ ача патне çитсе килнĕ. «Температура 37,5 градус пулнă терĕ амăшĕ, халĕ çук. Ӳпкисем тасах, пырĕ кăна кăштах хĕрлĕ», – йăлана кĕнĕ тăрăх чирлĕ ача сывлăхĕ пирки шăнкăравласа пĕлтерчĕ вăл Ишекри пĕтĕмĕшле практика тухтăрĕн офисне.

### Ачасем витленĕрен ятне килĕштермен

Хут çинче «Калерия» ят тăрать пулин те паллакансем ăна «Галя, Галина» тесе чĕнеççĕ. «Калерия — сайра тĕл пулакан ят, атте хăйĕн юратнă вĕрентекенне халалласа мана çавăн пек ят панă. Çав тери илемлĕ, кăмăллă çын пулнă тетчĕ атте ун пирки, мана та çавăн пек пултăр тенĕ, – аса илет фельдшер, – арçын ачасем «Калери-Валери» тесе витлетчĕç, çавăнпах хамăн ят килĕшместчĕ, кайран хăнăхрăм. Анне «Галя» тетчĕ, çынсем те ăна пăхса мана çапла чĕнетчĕç». Çапла майпа вăл ял çыннисемшĕн, паллакан-хурăнташшăн «Галя» пулса юлнă. Мĕншĕн медицина ĕçченĕ пулма шухăшланăши? «Шурă халата юратнипех пуль», – çапла калать вăл кун пирки. Хĕрĕ те унăн çулĕпе кайнă, медсестра профессине алла илнĕ.

Калерия Петровна 1976 çулта Шупашкарти медицина училищине пĕтерсен малтанах терапи уйрăмĕнче вăй хурать, кайран кăна ФАПа ĕçлеме куçать. «Кунта хирург та, терапевт та, педиатр та пулмалла», – тет вăл фельдшер ĕçĕн хăйне евĕрлĕхне палăртса. Чирлĕ, тăруккăн аптăраса ӳкнĕ çынна пĕрремĕш пулăшу парасси – унăн тивĕçĕ. Ĕçре вара тĕрлĕрен пулать. Кирек мĕн сиксе тухас пулсан кам патне пулăшу ыйтма каятпăр? Паллах, тухтăр патне. Кăшавăшра пурăнакан, Чаканарта вăй хуракан Калерия Петровна патне пĕр ялта пурăнакансем те, хăй пăхса тăракансем те килсех тăраççĕ. «Ас тăватăп, темиçе çул каялла Гаврил Деомидов, ватăскер ун чухне пурăнатчĕха, чирлесе ӳкнĕччĕ. «Галя, çăл, сывлăш çитмест», – аран-аран калаçатчĕ хайхи. Системăсем лартнипе кăна çăлса хăварма май килчĕ пуль ун чухне. Чĕрепе аптăракан тепĕр ватăна тухтăрсем нумай пурăнасса шантармарĕç. Тепĕр 7-8 çул пурăнчĕ хайхи», – вырăнти халăхран нумайăшĕ аслă çулхисем пулнине, вĕсене фельдшер пулăшăвĕ кирлине палăртать Калерия Петровна. Анчах та пур чухне те этем пурнăçне çăлса хăварма май килмест. Пĕлтĕр çулла пулса иртнĕ пĕр синкер паян та унăн куçĕ умĕнчех. «Çăлса хăвараймарăмăр ун чухне çамрăка, ун пекки текех ан пултăрччĕ», – хаш сывлать Калерия Петровна çул çитмен ачине çухатнă амăшĕн чунне ăнланса.

### Эмелпе кăна мар, сăмахпа та сиплет

ФАПра яланах халăх – пĕрисене укол тумалла, теприсене капельницăпа эмелсем тумлатмалла, сурансене çыхмалла. Кунтах гинекологи пӳлĕмĕ те пур. Вунă кунта пĕрре Ырашпулăх ялне çитме тăрăшать Калерия Петровна. Çу кунĕсенче çуран утасси хăратмасть пулсан, хĕллехи вăхăтра тавран çаврăнма тивнĕрен пĕр еннелле 12 çухрăм та парăнтарма тивет. Ун пек чухне кӳршĕ яла кун каçмаллах тухса каять вăл, килĕрен çӳресе çынсен сывлăхне тĕрĕслет. Пĕр-пĕр чирпе пыракана больницăн регистратурине шăнкăравласа тухтăр патне çырăнма пулăшать. «Çакăнти çынсене питĕ хăнăхрăм», – кунта кашни çын тăван пек çывăх пулни курăнать унăн сăмахĕсенче.

Вырăнти çынсем те ăна ырăпа тавăраççĕ. Вĕсемшĕн Калерия Петровна – фельдшер кăна мар, юлташ та, кирлĕ вăхăтра итлесе тивĕçлĕ сĕнӳ-канаш паракан та. Эмелпе кăна мар, ырă сăмахпа яланах пулăшма хатĕр вăл. Ăшă сăмахран хаклăрахххи пур-и вара?

■ **АННА ФИЛИППОВА**

**СĂМАХ МАЙ**

**Районта пурĕ 296 медицина сестри вăй хурать.**



## уДАЧный сезон для покупки LADA в «Диал-Авто»: выгода до 131 090 руб.

**Наступил долгожданный май – месяц, который греет нас не только ярким солнцем, теплой погодой, но и многочисленными праздниками – Праздник Весны и Труда, День Победы и Троица, которая приходится в этом году на 27 мая. По традиции в майские праздники открывается и дачный сезон.**

Самое время задуматься о покупке автомобиля, который сможет удовлетворить все Ваши потребности; такого, который будет стильным, динамичным и комфортным в городских условиях, проходимым и надежным на внедорожье. Всем этим требованиям соответствуют автомобили LADA.




Уместить всех домочадцев для поездки на троицу в семиместный LADA Largus, погрузить весь садовый инвентарь и поехать на огород на LADA Granta или LADA Vesta SW, уехать на рыбалку, за ягодами, грибами или на пикник не переживая, что застрянете на LADA 4x4, организовать поездку за рулем на море на стильной и комфортной LADA Vesta. В «Диал-Авто» каждый найдет для себя свою LADA.

Все автомобили LADA имеют ряд незаменимых преимуществ перед конкурентами: вместительный багажник и салон; высокий дорожный просвет; широкий выбор комплектаций; недорогое сервисное обслуживание и, самое важное, приемлемая цена и условия покупки.

В праздничный месяц лучший официальный дилер LADA в России «Диал-Авто»* дарит праздничные выгоды - **до 131 090 рублей** по программам:**

**1. Трейд-ин (обмен старого авто на новый) или LADA Finance***.** Программы помогут сэкономить время и деньги на продаже старого авто, оформить кредит по минимальным ставкам, получив дополнительную выгоду.

**2. «Первый автомобиль» или «Семейный автомобиль» - выгода 10% от стоимости автомобиля****.**

Мы поздравляем Вас с прошедшими и наступающими праздниками и приглашаем воспользоваться праздничными выгодами на покупку нового автомобиля LADA в «Диал-Авто»!

**г. Чебоксары,**
**ул. Автомобилистов, д. 2.**
**Тел.: 8 (8352) 220-120.**

* По итогам глобального рейтинга ПАО «АВТОВАЗ» за 2017 год.

**Акция действует с 01.05.2018 по 31.05.2018г. Указана максимальная выгода на LADA XRAY с ПТС 2018 года в цвете «Ледниковый», в комплектации 1.8 л 16-кл. (122 л.с.), 5АМТ / Exclusive (Эксклюзив) с учетом выгоды: 50 000 рублей по программе LADA Finance и 81 090 руб.рублей по одной из госпрограмм «Первый автомобиль» или «Семейный автомобиль».

***Программа автокредитования, реализуемая ПАО "АВТОВАЗ" совместно с банками-партнерами. Подробности в автосалоне Диал-Авто.

**** Право на указанную единовременную выгоду в размере 10% от стоимости автомобиля в рамках программы автокредитования представляется гражданам, приобретающим первый раз автомобиль в собственность или имеющим двух или более несовершеннолетних детей. ПАО АВТОВАЗ оставляет за собой право на изменение срока и условий действия программ. Кредит предоставляется ПАО «Банк ВТБ», Генеральная лицензия Банка России №1000 от 08.07.2015 г. Предложение ограничено. Подробности в автосалоне Диал-Авто.

(Р) 05-23

# Сапер пĕр хутчен кăна йăнăшать



**Ветерансене Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе саламлассине «Тăван Ен» хаçат редакцийĕ йăлана кĕртнĕ. Кăçал та уяв умĕн ăна пăсмасăр Шупашкарти Екатерина Семеновăпа çыхăнтăмăр. Кунта унăн ашшĕ, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен таврăнсан «Тăван Ен» хаçат редакторĕнче вăй хунă Анатолий Семенов пурăнать.**

Хаçатăн тĕп редакторĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Виктория Вышинская тата штатра тăман корреспондент Ксения Михайлова кунта пĕрремĕш хут мар. Çар медалĕсемпе орденсене кăкăр тулли çакнă пиншакне тăхăннă Анатолий Семеновичпа вĕсене мăшăрĕ Анна Яковлевна кĕтсе илчĕ. Виктория Анатольевна уяв саламĕпе открытка, хĕп-хĕрлĕ гвоздикăсем тата асăнмалăх парне кӳчĕ ветерана, вăрăм ĕмĕр, сывлăх тата канлĕ ватлăх сунчĕ. Анатолий Семенович çĕр çула çитиччен, ытларах та пурăнма шантарчĕ. Вăрçăра аманни, пилĕк çул каяллахи инсульт хăйĕн пирки аса илтерсех тăрсан та ветеран салтак пурнăçĕ, Ленинград блокади, унтан ачасене Ишекри ача çуртне ăсатни çинчен ĕнер пулнă пек каласа парать. Журналистсем хăйсен блокночĕ çине çырса хумаллине кашнинчех тупаççĕ. Анатолий Семенов 1923 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче Аркассинче çуралнă. Çара кайма 41-мĕшĕнчи августра ят тухнă унăн, çакăн хыççăнах Златоустри сапер-минер училищине вĕренме янă. Çапăçу уйне 1942 çулта кĕнĕ – тĕплĕ хатĕрленĕ. Сапер пĕр хутчен йăнăшать теççĕ. Ку – телее, пирĕн ентеше пӳрмен. Стрелоксен 259-мĕш Артемовск дивизийĕн саперсен 437-мĕш уйрăм батальонĕн взвод командирĕн аса илмелли темĕн чухлех. Волховск фрончĕпе пĕрле вăл Ленинград оборонине хутшăннă, Кăнтăр-Хĕвел анăç тата Украинăн тăваттăмĕш фрончĕсемпе тăшмана тапăнса пынă çĕре те. «Ленинград оборонишĕн» медаль хăйĕншĕн чи çывăххине палăртать. Пур наградăна та куççульпе, юнпа тивĕçнĕ Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн кавалерĕ. Çар тивĕçне 1946 çулта Болгарире пурнăçласа татнă. Вăрçă хыççăнах 1950 çулччен вăл Шупашкар тата Куславкка районĕсен хаçачĕсен тĕп редакторĕнче вăй хунă. Вăрçă уйĕнче, тупă шартлатнă сасăсене илтсе çырăннă хайлавĕсене кун çути кăтартнă. Ветеран аса илĕвне лăпкăн итлеме май çук, куç та шывланать. Мĕн чухлĕ хĕн-хур тӳснĕ вĕсем, çапăçу уйĕнче мĕн чухлĕ çухату курнă... Чĕрене хумхантарса хваттерте çар юррисен пластинки вылярĕ те вылярĕ... ■



Аслă Çĕнтерӳ кунĕ умĕн редакци коллективĕ хаçатăн тĕп редакторĕ пулнă Яков Никитин вил тăприне шыраса тупса тирпейлерĕ. Тĕллеве пурнăçа кĕртме пулăшнăшăн тепĕр тĕп редакторăн Андрей Михайловăн мăшăрне Галина Григорьевнăна тав тăватпăр. 1957 çулта Яков Никитич ăна наборщицăна ĕçлеме илнĕ.

# Чапаев музейĕ умĕнче



• ТĔЛ ПУЛУ

**Совет Çарĕсен ушкăнĕнче Германире хĕсметре тăнă ветерансем майăн 1-мĕшĕнче Шупашкарти В.И. Чапаев палăкĕ умĕнче иртнĕ митинга хутшăнчĕç.**

Тĕрлĕ районпа хуларан 30 ытла ветеран пухăнчĕ. Пухăннисен умĕнче республикăри пĕрлешӳ ертӳçи Михаил Семенов тата ыттисем тухса каласрĕç. «49 çул хушши 108 пин чăваш каччи Германи çĕрĕ çинче хĕсметре тăнă, çар тивĕçне туллин пурнăçласа мирлĕ пурнăçа сыхланă», – палăртрĕ хăйĕн сăмахĕнче Михаил Семенов. Совет Çарĕсен ушкăнĕнче Германи çĕршывĕнче – Варшава Договорĕпе хĕсметре тăнăшăн медале Мăн Маркари Геннадий Иванов, Анатолий Сапожников тата ыттисем тивĕçрĕç.

Ветерансен хушшинче пĕр вăхăтри службăра тăнă 3 ветерана курма çав тери кăмăллă пулчĕ. Вĕсем – 1981-1983 çулхи кĕрхи призывпа Готте хули çывăхĕнче вырнаçнă чаçри çар тивĕçне пурнăçланă «ентешсем» – Муркаш районĕнчи Юрий Иванов, Елчĕкри Юрий Портнов тата Йошкар-Олари Василий Орехов пулчĕç. «Тăваттăмĕш салтакĕ килеймерĕ-ха», – терĕç кăмăллăн 35 çултан тĕл пулнăскерсем. Майăн 9-мĕшĕнче Шупашкарти Хĕрлĕ тӳремре тĕл пулăпăр», – калаçса татăлчĕç ветерансем.

**НИКОЛАЙ СМИРНОВ,**
**АТĂЛЪЯЛ**

• ШКУЛ КОРРЕСПОНДЕНЧĔ

# Мăн асаттепе мухтанатăп

Майăн 9-мĕшĕнче эпир Аслă Çĕнтерӳ кунне паллă турăмăр. Çак вăрçă чăваш халăхне те нумай çухату кӳнĕ. Вăрçă хирĕнче 106 пин çын пуçне хунă, пĕтĕмĕшле илсен 208 пин салтак фашистсене хирĕç кĕрешнĕ. Вĕсен хушшинче – манăн мăн асатте Николай Иванович Шорков та. Вăл 1919 çулхи декабрĕн 8-мĕшĕнче Çĕнъял ялĕнче çуралнă. Унтах шкул пĕтернĕ, кайран Шупашкарта ĕçленĕ. 1939 çулхи декабрь уйăхĕнче ăна Хĕрлĕ Çара илнĕ, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланиччен вăл Белоруçре вырнаçнă 137-мĕш авиабазăра отделени командирĕ пулнă. Мăн асатте вăрçăн пĕрремĕш кунĕсенчех хаяр çапăçăва кĕнĕ. Мĕн вăрçă пĕтиччен вăл сывлăш çар батальонĕнче фашистсемпе кĕрешнĕ, самолетсемпе аэродромсене сыхланă, вĕсен ĕçне йĕркеленĕ. 1943 çулта ăна парти членне илеççĕ, вăл вăхăтра нумай салтак коммунист пулса тăрать.

1946 çулта мăн асатте киле таврăннă. «Аманман, пленра пулман», – çапла каласа панă вăл кĕскен хăйĕн çинчен. Мăн асаттене «За отвагу» тата «За победу над Германией» медальсемпе чысланă. Николай Иванович Çĕнтерӳ кунне Германире кĕтсе илнĕ.

Тăван яла таврăнсан мăн асатте çемье çавăрнă, тĕрлĕ ĕçре вăй хунă. Вăл питĕ сăпайлă, ĕçчен те тăрăшуллă çын пулнă. Ялйыш ăна хисеплесе вăрçă хыççăнах колхоз председательне суйланă. Манăн аттешĕн, хăйĕн мăнукĕшĕн, вăл ырă тĕслĕх пулнă. Пирĕн çемьере мăн асаттене яланах ырăпа асăнаççĕ. Вăл çĕршыва ирĕке кăларассишĕн, пирĕн телейлĕ пурнăçшăн кĕрешнĕ. Пилĕк çул хушши, мĕн вăрçă пĕтиччченех, çапăçу хирĕнчен тухман.

Эпĕ мăн асаттене курман, анчах ун çинчен асаннепе атте нумай каласа кăтартнă. Эпĕ унпа мухтанатăп. Ун пек çирĕп кăмăллă та тарават пулма тăрăшатăп. Эпир асаннепе ун çинчен материалсем пухатпăр, тĕрлĕ архиври çырнисемпе паллашатпăр. Тав сире, мăн асаттесемпе мăн асаннесем, пире çакăн пек ырă пурнăç парнеленĕшĕн.

**ПАВЕЛ ШОРКОВ,**
**ÇĔНЪЯЛ ШКУЛĔ, 4-МĔШ КЛАСС**

## ВНИМАНИЕ! ИСТОЧНИК ПОВЫШЕННОЙ ОПАСНОСТИ!

**К сведению руководителей промышленных предприятий, строительно-монтажных организаций, колхозов, совхозов, фермерских и арендных хозяйств, других землепользователей и частных лиц.**

**Чебоксарское ЛПУМГ - филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород»** уведомляет: по землям **Чебоксарского района** проходят газопроводы-отводы высокого давления (от 55 до 75 атмосфер), обеспечивающие потребности промышленных предприятий и населения района в природном газе, являющиеся **объектами повышенной опасности!**

Строительными нормами и правилами СНиП III-Д.10-62 (Актуализированный СНиП 2.05.06-85) установлены **ЗОНЫ МИНИМАЛЬНО-ДОПУСТИМЫХ РАССТОЯНИЙ** от осей газопроводов и границ газораспределительных станций (далее – ГРС) до населенных пунктов, отдельных промышленных и сельскохозяйственных предприятий, зданий и сооружений, отдельно стоящих нежилых и подсобных строений, гаражей и открытых стоянок для автотранспорта, коллективных садов, автомобильных и железных дорог. **Зоны минимальных расстояний составляют от 100 до 350 метров** в зависимости от диаметра газопровода, степени ответственности объектов, **указанных на знаках** закрепления газопроводов и служат для **обеспечения безопасности этих объектов.**

На указанных земельных участках **НЕ ДОПУСКАЕТСЯ строительство каких бы то ни было зданий, строений и сооружений** в пределах установленных минимальных расстояний до объектов системы газоснабжения (Земельный Кодекс РФ № 136-ФЗ от 25.10.2012 г. ст. 90 п.6).

В соответствии с требованиями Федерального Закона от 31.03.1999 г. № 69-ФЗ ст. 32 здания, строения и сооружения, построенные ближе установленных строительными нормами и правилами минимальных расстояний до объектов систем газоснабжения, **ПОДЛЕЖАТ СНОСУ за счет средств юридических и физических лиц, допустивших нарушение.**

**Приватизация земель в зоне минимально допустимых расстояний НЕ ДОПУСКАЕТСЯ** без согласования с организацией эксплуатирующей газопровод и ГРС – Чебоксарского ЛПУМГ - филиалом ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород».

Кроме того, Правилами охраны магистральных трубопроводов, утвержденными Постановлением Правительства и Госгортехнадзора РФ (№ 9 от 22 апреля 1992 года), в целях исключения возможных повреждений газопроводов, установлены **ОХРАННЫЕ ЗОНЫ** газопроводов в виде участков земли, примыкающих к газопроводу на всем протяжении **на расстоянии 25 метров от оси газопровода с каждой стороны и в 100 метрах от каждой стороны ограждения ГРС.**

**ЛЮБЫЕ РАБОТЫ в охранных зонах без письменного разрешения** Чебоксарского ЛПУМГ - филиала ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород», эксплуатирующего газопроводы и ГРС, **ЗАПРЕЩЕНЫ.**

В настоящее время **УЧАСТИЛИСЬ СЛУЧАИ ПОВРЕЖДЕНИЯ газопроводов** строительной техникой организаций, выполняющих земляные работы в охранных зонах газопроводов без соответствующего разрешения, в том числе электрических кабелей, линий теле-радиокоммуникаций, водопроводов, нефтепроводов и т.д.

Механическое повреждение газопровода высокого давления может привести к **НЕГАТИВНЫМ ПОСЛЕДСТВИЯМ - взрыв большой разрушительной силы, человеческие жертвы, материальные потери и прекращение газоснабжения потребителей.**

**Виновные** в нарушении Правил охраны магистральных трубопроводов и СНиП **подвергаются уголовному преследованию** по ст. 269 УК РФ.

**СВЕДЕНИЯ о местонахождении газопроводов и ГРС, а также размер установленной зоны минимально допустимых расстояний и охранной зоны конкретного земельного участка**, заинтересованные юридические и физические лица могут получить **в местном комитете по земельным ресурсам и землеустройству,** а также в Чебоксарском ЛПУМГ - филиале ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород».

**При обнаружении утечек газа** в охранных зонах и зонах минимальных расстояний магистральных газопроводов работ, **по вопросам производства строительно-монтажных и других работ** в зоне прохождения газопроводов, а также для предупреждения нежелательных последствий **при оформлении сделок с землями,** по которым проложены газопроводы, обращайтесь в Чебоксарское ЛПУМГ - филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород».

По телефонам **8 (8352) 30-54-09, 30-54-22.**

или по адресу: **428027, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 25.**

05-17

● ПУЛЬС РЕСПУБЛИКИ

## В «майском» указе – новые задачи

**Президент подписал Указ «О национальных целях и стратегических задачах развития Российской Федерации на период до 2024 года».**

В числе 12 приоритетных направлений – демография, здравоохранение, образование, жилье и городская среда, экология, безопасные и качественные автомобильные дороги, производительность труда и поддержка занятости, наука, цифровая экономика, культура, малое и среднее предпринимательство и его поддержка, международная кооперация и экспорт.



**Александр ИВАНОВ,** министр информационной политики и массовых коммуникаций ЧР:

– Новый «майский» Указ Президента подтвердил курс на высокотехнологичное развитие нашей страны на ближайшие годы. Цифровая экономика признается новым национальным проектом. Активное внедрение ИТ-технологий в разные сферы экономики и общественной жизни, безусловно, привносит качественные изменения в жизнь всех граждан. Многое предстоит сделать на региональном уровне: разработать нормативные документы, запустить новые цифровые проекты. Приоритетных направлений несколько – развитие ИКТ-инфраструктуры, переход на отечественный софт, внедрение «умных» технологий, перевод услуг в электронный вид. Особая задача – развитие кадрового потенциала.

Убежден, что мы сможем воплотить в жизнь самые амбициозные задачи и вывести отрасль на новый уровень развития.



**Владимир ДИМИТРИЕВ,** и.о. главы администрации Чебоксарского района:

– Чебоксарский район примет участие во всех направлениях, обозначенных в Указе «О национальных целях и стратегических задачах развития Российской Федерации на период до 2024 года» Президента России Владимира Путина.

Особенно важными для нас является выполнение задач по приоритетным проектам в области экологии и дорожного хозяйства. Наш район с 2017 года участвует в проекте «Безопасные и качественные дороги». В прошлом году на эти цели было выделено 118 млн рублей, в этом году работы будут произведены на сумму 247 млн рублей.

В 2018 году мы вошли в федеральную программу «Чистая страна», в соответствии с которой будет проведена рекультивация санкционированной свалки твердых бытовых отходов, расположенной у д. Ильбеши. На эти цели из бюджетов вышестоящих уровней выделяется более 38 млн рублей.

Также стоит задача по соблюдению объемов ввода жилья, созданию комфортной городской среды для проживания граждан. Продолжится участие в программе «Местный дом культуры».

В целом можно сказать, что Указ Президента России станет для нас ориентиром для работы на обозначенный период.



**Вера БЛИНОВА,** заведующая Ердовским сельским клубом:

– Радует то, что Президент РФ Владимир Путин особое внимание уделяет обеспечению доступным жильём семей со средним достатком. Им поставлена задача создать возможности для приобретения ими жилья с использованием ипотечного кредита, ставка по которому должна быть менее 8%. Это очень важно для нынешней молодежи, для тех, кто недавно создал новую ячейку общества.

# Настоящие ветераны о войне говорят неохотно

● НАША ГОРДОСТЬ

**В рамках 73-летней годовщины Победы в Великой Отечественной войне 1941-1945 годов министр здравоохранения Чувашской Республики Владимир Викторов посетил ветерана Великой Отечественной войны Елену Осипову, проживающую в д. Ердово Чебоксарского района.**



В. Викторов в гостях у ветерана Е. Осиповой



Вместе с ним поздравить 96-летнюю женщину приехали I заместитель главы администрации Чебоксарского района Зоя Маслова, главный врач Чебоксарской районной больницы Елена Петрова, старший фельдшер Алевтина Окликова.

Владимир Викторов поздравил ветерана от имени Президента России Владимира Путина и Главы Чувашии Михаила Игнатьева. Он заметил, что в семье чтут память предков, на стенах в доме висят потртеты родных. За чаепитием гости интересовались ее здоровьем, детьми, условиями проживания. Буквально на прошлой неделе сотрудники районной больницы подарили Елене Егоровне слуховой аппарат.

По словам Алевтины Павловны, Елена Осипова – единственный оставшийся в живых ветеран-медик Чебоксарского района. В прошлом году ушли из жизни трое ветеранов. Елена Егоровна в 1941 году окончила Цивильскую фельдшерско-акушерскую школу. На войне трудилась фельдшером в эвакогоспитале 5088, Ивановской больнице Тульской области, здравпункта завода № 629. После демобилизации вернулась на родину и устроилась на должность фельдшера Ердовского фельдшерского пункта. Через три года – патронажной медсестрой, затем дежурной медсестрой Акулевской больницы.

После открытия в п. Новое Атлашево врачебной амбулатории Елена Егоровна была переведена на должность медсестры. И вплоть до 1983 года, до выхода на пенсию, трудилась там на благо местных жителей.

Семья Осиповых воспитала 6 детей, которые подарили родителям 13 внуков, 9 правнуков, 1 праправнучку. Как рассказала дочь ветерана Клавдия Егоровна, ее мать не любит говорить о военных годах, поскольку эти воспоминания ее сильно расстраивают. «Мама рассказывала, как одной приходилось по ночам сторожить оружейные склады, как ей было страшно. Изредка вспоминает про лечение раненых, говорила, что тяжелобольных отправляли в тыл, легкие ранения лечили прямо на месте», – делится Клавдия Егоровна.

До сих пор, несмотря на то, что Елена Осипова плохо видит и слышит, она любит вязать, читать книги и газеты. Прежде чем начать какую-либо работу, дети всегда считаются с ее мнением. «Она у нас командир. По сей день учит меня как правильно прясть и стряпать», – улыбается дочь ветерана.

Множество медалей и орденов красуется на груди у долгожительницы. Среди них орден Отечественной войны II степени, медаль «За победу над Германией», юбилейные медали и многие другие награды.

ЯНА МАЙСКАЯ

● В МАСШТАБАХ СТРАНЫ

**18 апреля 2018 года стартовал очередной XV Межрегиональный конкурс «Хочу стать дипломатом», целью которого является поиск молодых людей, которые хотели бы связать свою жизнь с работой в системе Министерства иностранных дел России.**

Конкурс проводится в 3 этапа. Победители получают направления Представительства МИД России в Нижнем Новгороде на обучение в НГЛУ им.Н.А.Добролюбова.

По условиям конкурса к участию в нем приглашаются молодые люди, проживающие на территории ПФО, не имеющие высшего образования.

Первый этап проводится с 18 апреля по 10 июня. Участникам предлагается написать эссе на тему «Почему я хочу стать дипломатом», в котором представить себя и рассказать, почему они выбрали для себя профессию дипломата. 11 июня подводятся итоги 1 этапа конкурса и объявляются участники и условия 2 этапа.

**17 мая, в Международный день детского телефона доверия, пройдет всероссийский онлайн-марафон «Круг доверия».**

Он будет организован в формате ток-шоу с прямой трансляцией в сети «Интернет» с 10.00 до 14.00. Эксперты-психологи расскажут жителям страны о работе Детского телефона доверия и ответят на поступающие вопросы и видеообращения. Знаменитые гости, известные артисты, исполнители, видеоблогеры и спортсмены придут, чтобы рассказать свои истории и поделиться опытом.

● НАВИГАТОР СОЦПОДДЕРЖКИ

## Если расходы превышают доход

**За 1 квартал 2018 года в отдел социальной защиты населения Чебоксарского района за назначением субсидий на оплату жилого помещения и коммунальных услуг обратились 258 семей, сумма выплаченных субсидий – 1576,30 тысячи рублей. Об этом сообщила начальник отдела Елена Львова.**

